**Внеклассное мероприятие по родной литературе**

# „ Савăнăçлисемпе пултаруллисен конкурсĕ”

*Андреева Лариса Анатольевна,*
*учитель родного языка и литературы*
*высшей квалификационной категории*
*МБОУ «Верхнелащинская ООШ»*
*Буинского муниципального района*
*Республики Татарстан*

***Тĕллевсем:***

1. Вĕренекенсен тавракурăмне  аталантарасси.
2. Литература пурнăç тĕкĕрĕ пулнине ăнлантарасси.
3. Вак жанрсемпе ĕçленĕ май вĕсене пурнăçра вырăнлă усă курма хăнăхтараси.

**1.Кам хăвăртрах тупмалли юмахсен тупсăмне тупать.**

- Ик урапаллă, бензин ыйтмасть. (Велосипед).
- Пĕр майрана куртăм та йĕрсе ятăм. (Сухан).
- Чипер хĕр пысăк уйра çӳрет. (Хĕвел).
- Кашта тулли шурă чăх. (Шăлсем).
- Çĕр çинче мĕн çивĕч?(Сăмах)
- Пĕр шăшин икĕ хӳре. (Çăпата).
- Пĕчĕк кинĕм пур, ирĕн-каçăн чуп тăвап. (Кашăк).
- Алăк умĕнче Альтук ташлать. (Шăпăр).
- Пӳртре мĕн ытлашши?(Çӳп-çап).
- Йывăрăш çук, виçи çук, кашни çыннăн пур.(Ăс).

- Чунĕ çук, юнĕ çук-кайăкран хытă вĕçет. (Самолет).
- Уйăх пăрахать, хĕвел илет. (Сывлăм).
- Хăй пĕрре çеç, пĕтĕм яла ăс салатать. (Вĕрентекен).
- Тĕнчере чи тутли мĕн?(Ыйхă).
- Шывра çуралать, шывран хăрать. (Тăвар).
- Шăлĕ пур  - çыртаймасть. (Кĕрепле).
- Лутра ялта юр çăвать. (Çăнăх аллани).
- Ниме юрамсать те кута юрать. (Тенкел).
- Хĕлле те, çулла та кĕрĕкпе.(Сурăх).

- Çын ĕçмест, выльăх чăтма пултараймасть, машина унсăр çÿремест. (Бензин).

## 2. Литературăри сăнарсем.

- Мускав кушакĕ мĕн ятлă? (Аттус).
- И. Егоровăн „Ывăл” калаври тĕп сăнар.(Улатимĕр).
- „Ача ырра курсан ырă пулать, усала курсан усал пулать” хăш калавăн эпиграфĕ?(Г.Волков „Ăслă ача”)
- В.Степановăн „Эксклюзивлă сăвăм”калаври ĕне ячĕ.(Маруç).
- Х.Уярăн калавĕнчи ват асаттĕшпе пурăнакан сăнар ячĕ.(Куçук).
- Ю.Скворцовăн автобиографииле калавĕ.(„Ама çури анне”).
- К.Ивановăн „Тимĕр тылă” мĕнле кĕнекере кун çути курнă?(„Чăваш халапĕсем”1908 ç.).
- Т.Петĕркки „Çутталла” хайлава кама халалласа çырнă?(И.Я.Яковлева).
- Н.Мартыновăн калавĕ мĕншĕн „Юнлă çырла” ятлă? (Юлташĕ çырла çинĕ чухне сирпĕнет)
- В Туркайăн „Айăп” калавĕнче мĕнле чĕр чун сарăмсăр вилет?(Пăши).

- Тымарсенчен чĕр чунсем тăвакан арçын ача ячĕ. (Эньтук).
- „Аппапа пĕрле” калав геройĕсем.(Верăпа Толя).
- „Юрлакан кĕленчесем” калавра мĕнле композитор ятне аса илнĕ?( Ф.Павлов).
- „Урок пуçланчĕ” калаври тĕп сăнар.(Олег).
- „Хăравçă мулкачра” миçе чĕр чун?(7:кашкăр, сурăх, тилĕ, мулкач, йытă, кашкăр, упа).
- Лидия Саринен „Кукамай’ калаври тĕп сăнар.(Толя).
- Кушак сухалне касакан художник ячĕ.(Курак Микехверĕ)
- А.Николаев кам асламăшĕ çинчен çырса панă? (Юрик).
- С.Шавлин сăввинчи банкра ĕçлекен слущи ячĕ.(Ваçça).
- Е.Лисинан автобиографилле калавĕ.(„Çăкăр чĕлли”).

## 3. Капитансен конкурсĕ.

Кам хăвăртрах.

1. С –пала эп пуçлансан

Çăм касса илен манран.
Т-пала чухне вара
Юратса çисе яратăн. (Сурăх – турăх).

2. Турса яраççĕ те – ташша çапаççĕ,
Ман кĕвĕпе юрра шăрантараççĕ.
Те сыпăка хушсассăн хыçăма –
Çĕр хут эп тăхăнатăп пуçăма. (Купăс – купăста).
3. Эп улатăп, шăхăратăп
Е ача пек макăратăп.
Сас палли улăштарсан –
Ман çинче утса пыратăн. (Çил - çул).
4. Сĕллипе те туллине
Ĕçченсе унта акаççĕ.
Сас палли хушсан çумне
Ăмăртса сиксе ташлаççĕ. (Уй – туй).
5. Çумăр хыççăн эп ялан
Çĕр çине тухса выртатăп.
Сас палли улăштарсан
Вăрманта çилпе кашлатăп. (Ăман – юман).

1. Пахча çимĕç вăл. Çумлатăн
Шăваратăн яланах.
Пит çинче ăна куратăн –
Сас палли улăштарсан. (Сухан –сухал).
2. Кĕр хыççăн эп çитетĕп –
Йăлтах юрпа витетĕп.
К-пулсан вара –
Юлап кăмакара. (Хĕл – кĕл).
3. Эп улатăп, ахăратăп,
Хӳшĕне юр тултаратăп.
Хыçăма а кĕртсе ларт та
Кайăк ячĕ эп пулатăп. (Тăман – тăмана).
4. Лаша хыççăн чупать – çитеймест.
Т – хушсан çĕклет вăл тӳпене. (Çуна – çунат).
5. Эпĕ - тĕс палли.
Хушсассăн сас палли
Щӳрпе, яшка та пăтă

Пĕçеретĕп эпĕ хытă. (Хура – хуран).

## 4.Грамматикăна эпĕ пĕлетĕп-ши?

- Чăваш алфавитĕнче пурĕ миçе сас палли?(37)
- Хăш сас паллисем сасăсене пĕлтермеççĕ?(ъ,ь)
- Уçă сасăсен килĕшĕвĕ.(Сингармонизм).
- Чĕлхери мĕн пур сăмахсен йышĕ.(Лексика).
- Пĕр пек илтĕнекен, анчах тĕрлĕ пĕлтерĕшлĕ сăмахсем.(Омонимсем).
- Синонимсен ретĕнчи тĕп сăмах.(Доминанта).
- Пăхма çывăх та утма инçе. Мĕнле илемлĕх мелĕ пытаннă?(Антоним).
- Сăмахăн улшăнман пайĕ. (Тымар).
- Предложенин тĕп членĕсем.(Подлежащипе сказуемăй).
- „Чакак питĕ чипер, хитре. Тумĕ унăн капăр. Аякран вăл хура шурă тĕслĕ анчах пек. Çывăхран пăхсан çакна асăрхатăн: хÿри ун хура мар иккен, хура симĕс.” Содержани енчен пăхсан мĕнле мел усă курса çырнă текст?(Сăнлав)

- Чăваш чĕлхинче миçе падеж?(8).
- Чăваш чĕлхинче ударени хăш сас паллисенчен хăрать? (Ă.Ĕ).
- Хисеп ячĕн пурĕ миçе ушкăн?(4).
- Предложенин кĕçĕн членĕсем.(Дополнени, определени, обстоятельство).
- Чĕлхе наукин сăмах çинчен, унăн улшăнăвĕ çинчен вĕрентекен пайĕ.(Морфологи).
- Чăваш чĕлхинче пурĕ миçе пуплев пайĕ?(11).
- Мăшăр сăмахсене мĕнле çыраççĕ?(Тире урлă).
- Чакак этеме çут çанталăка самаях усă кÿрет. Уй-хирте, вăрманта вăл шăшисем нумай тытать. Тыр-пулшăн сиенлĕ нăрăсене пĕтерет.(Ăслав).
- Материк, вăрман, кÿлĕ, ... урăхла вĕсене пĕр ятпа мĕнле калаççĕ?(Топонимсем).
- Акă çитрĕ уйăх май
- Эп утатăп çиле май. Илемлĕ мелĕ.(Омоним).

**5.Ваттисе сăмахĕсене вĕçлемелле.** (Ушкăнсене ваттисен сăмахĕсен малтанхи пайĕсене те, иккĕмĕш пайĕсене те уйрăм панă. Вĕсене пĕрлештерес пулать.)

- Çăкăра чăмласа çи, *сăмаха шухăшласа калаç.*
- Шур хут çине çырнине *кĕреçепе хырма çук*.
- Чĕлхӳ каланине *пуçу пĕлсе тăтăр.*
- Ăçта кайсассăн та *ăса кура хакласçĕ.*
- Ĕçрен куç хăрать те, *алă тăвать теççĕ.*
- Ăшă сăмах – çу кунĕ, *сивĕ сăмах – хĕл кунĕ.*
- Паян тумалли ĕçе *ырана ан хăвар.*
- Ĕçне тумасăр *ан мухтан.*
- Пĕчĕк чăнлăх *пысăк суяна çĕнтерет.*
- Пĕлӳрен хаклă *пурлăх çук.*

**6. Куракансемпе ĕçлетпĕр.** (Ушкăнсем ĕçленĕ вăхăтра куракансемпе вăйă ирттеретпĕр). Суеççĕсен вăййине вылятпăр. Сценă çине пĕр ачана тухма ыйтатăп. Ман ыйтусем çине хăвăрт хурав памалла, хуравĕсем пурте пĕр сас паллинчен пулмалла.
-Эсĕ мĕн ятлă? (Хĕлип)
-Хушамату мĕнлеччĕ-ха санăн?(Харитонов)
-Ĕнертенпех эсĕ ăçта кăма тăрăшатăн?(Хусана)
-Мĕн тума кайасшăн эсĕ унта?(Хоккейла вылями)
-Кам кĕтет сана унта?(Хĕветле)
-Эсĕ ăна мĕн парнелесшĕн?(Хайчă)
-Пире валли мĕн илсе килетĕн?(Хăяр)
-Мĕле хăяр?(Хаклă хăяр)
-Эсĕ Хусана хăçан каясшăн вара?(Хĕлле)

**7.Пирĕн пултарулăх**. (Ушкăнсем хăйсен пултарулăхĕпе паллаштараççĕ).